ÇĔНТЕРӲ ЯЧĔПЕ САЛАМЛАТПĂР, ЮЛТАШСЕМ!

28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.


1945
МАЙ
9
ЮНКУН
88(6839) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Сыва пулччăр аслă çĕнтерӳ тунă паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ!

Сыва пултăр пирĕн хăватлă Совет халăхĕ!

Сыва пултăр пирĕн çĕнтерӳсен организаторĕ Аслă СТАЛИН!

Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем пĕр сăмахсăрах паранни çинчен калакан акта ала пусни

Вăрçăра паранни пирки çырнă акт

1. Эпир, аялта ала пуснисем, Германин верховнăй командованийĕ ячĕпе, хамăрăн тип çĕр çинчи, тинĕс çинчи тата сывлăшри мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсем, çавăн пекех тата хальхи вăхăтра нимĕç командованийĕ ертсе пынипе кĕрешекен мĕнпур вăйсем Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандованине тата çакăнпа пĕр вăхăтрах Союзниксен Экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй Командованине пĕр сăмахсăрах паранассипе килĕшетпĕр.

2. Германин верховнăй командованийĕ нимĕçсен тип çĕр çинчи, тинĕс çинчи тата сывлăшри вăйĕсен мĕнпур командующийĕсене, çавăн пекех Германи командованийĕ ертсе пынипе кĕрешекен мĕнпур вăйсене вăтаçĕрти Европăри вăхăтпа 1945 çулхи майăн 8-мĕшĕнче 23 сехет те 01 минутра вăрçă ĕçĕсене чарса лартма хушса, вĕсем хальхи вăхăтра тăнă вырăнтах юлма хушса, хĕçпăшала пĕтĕмпех парахма, хăйсен мĕнпур хĕçпăшалĕпе çар пурлăхне союзниксен вырăнти командующийĕсене е союзниксен Верховнăй Командованийĕн представителĕ пулма уйăрнă офицерсене пама хушса, пароходсемпе суднăсене тата самолетсене, вĕсен двигателĕсене, корпусĕсене тата оборудованине, çавăн пекех тата машинăсене, хĕçпăшалсене, аппаратсене тата вăрçă вăрçмалли техника хатĕрĕсене пурне те аркатмасăр тата нимĕнле сиен те тумасăр тăма хушса, халех приказсем кăларать.

3. Германин верховнăй командованийĕ, халех тивĕçлĕ командирсем уйăрса лартса, Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандованийĕ тата Союзниксен Экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй Командованийĕ малашне кăларакан мĕнпур приказсене пурнăçа кĕртмелле тăвать.

4. Çак акт ăна мĕнле те пулин урăх генеральнăй документпа, паранасси çинчен калаканскерпе, Германи пирки тата Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем пирки Пĕрлешнĕ нацисем е вĕсен ячĕпе йышăнакан документпа улăштарма кансĕрлемест.

5. Нимĕçсен верховнăй командованийĕ е вăл ертсе пынипе кĕрешекен мĕнле те пулин хĕçпăшаллă вăйсем çак паранасси çинчен калакан актпа килĕшӳллĕн ĕçлемесен, Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Командованийĕ, çавăн пекех тата Союзниксен Экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй Командованийĕ хăйсем кирлĕ тесе шутлакан пусармалли мерăсем йышăнаççĕ е ытти ĕçсем тăваççĕ.

6. Çак акта вырăс, акăлчан тата нимĕç чĕлхисемпе çырнă. Вырăс тата акăлчан чĕлхисемпе çырнă текстсем кăна чи тĕрĕс текстсем пулса тăраççĕ.

1945 çулхи майăн 8-мĕшĕнче Берлин хулинче ала пуснă.

Германин Верховнăй Командованийĕ ячĕпе: КЕЙТЕЛЬ, ФРИДЕБУРГ, ШТУМПФ.

Ала пуснă чухне çаксем пулнă:

Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандованийĕ хушнипе Совет Союзĕн Маршалĕ Г. ЖУКОВ.

Союзниксен Экспедициллĕ Вăйĕсен Верховнăй Командующийĕ хушнипе Авиацин Главнăй Маршалĕ ТЕДДЕР

Ала пуснă чухне çавăн пекех тата свидетель вырăнĕнче çаксем пулнă:

США-н сывлăшри стратегиллĕ вăйĕсен командующийĕ генерал СПААТС.

Франци Çарĕн Главнокомандующийĕ генерал ДЕЛАТР ДЕ ТАССИНЬИ

СССР Верховный Совет Президиумĕн
УКАЗĔ
Майăн 9-мĕшне çĕнтерӳ праçникĕ тăвасси çинчен

Совет халăхĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пынă Отечественнăй Аслă вăрçă çĕнтерӳллĕн пĕтнине тата Хĕрлĕ Çар историллĕ çĕнтерӳсем тунине, гитлерла Германие пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнипе тата вăл пĕр сăмахсăрах паранни çинчен пĕлтернипе вĕçленнĕскерне, яланлăха палăртса хăварас тесе, майăн 9-мĕшне пĕтĕм халăхăн уяв кунĕ—ÇĔНТЕРӲ ПРАÇНИКĔ—тума йышăнас.

Майăн 9-мĕшне канмалли кун тесе шутлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1945 çулхи майăн 8-мĕшĕ.

СССР Совнаркомĕнче

СССР Верховный Совет Президиумĕ Майăн 9-мĕшне ÇĔНТЕРӲ ПРАÇНИКĔ тăвасси çинчен йышăннă Указ тăрăх, СССР Совнаркомĕ 1945 çулхи Майăн 9-мĕшне канмалли кун тесе шутлама йышăннă.

* * *

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ совет учрежденийĕсене пурне те кăçалхи майăн 9-мĕшĕнче—пĕтĕм халăхăн уяв кунĕнче—ÇĔНТЕРӲ ПРАÇНИКĔН кунĕнче—хăйсен çурчĕсем çине Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Государства Ялавне çĕклесе лартма хушнă.

АСЛĂ ÇĔНТЕРӲ

Юлташăмсем, тăванăмсем,
Тухатпăр урама,
Пуçлатпăр юрлама,
Пуçлатпăр ташă ташлама!

Вăл çитрĕ,
çитрĕ чун пек кĕтнĕ ир.
Мĕнпур чĕрешĕн чи вĕри сăмах
Ăна илтрĕмĕр эпир.

Хавасла, асла çĕнтерӳ,
Чĕрешĕн мĕн тери хĕрӳ!

Пĕтĕм çĕр чăмăрĕ таврa,
Хăватлă çĕнтерӳ, янра!

Çак сăмаха кашни хăй чĕринче
Нумай çулсем
усранă,
ăшăтнă,
вĕрилентернĕ.
Ак халь ылханлă тăшмана пĕтернĕ,
Ăна тĕппех аркатнă та çĕнтернĕ!

Паян çавна ак илтрĕ пур тĕнче,
Вăл янăрать Мускав площадĕнче,
Вăл янăрать çĕр сывăрман заводсенче,
Вăл янăрать колхозник пӳртĕнче,
Вăл—кашни çыннăн чунĕнче.

Хавасла, аслă ир!
Хăмач ялав пек тухрĕ шурăмпуç!
Мухтав та тав сана,
Хăватлă Маршал,
аслă командир,
Аттемĕр Сталин,
тăванăмăр çулпуç!

Эс патăн халăха
Çак аслă ырлăха.
Çулпуçăмăр, эс ĕмĕр-ĕмĕрех
Пулатăн пирĕн чĕрере,

Вăл тухрĕ, тухрĕ çĕнтерӳ хĕвелĕ,
Пур халăх та ĕмĕрлĕхе телейлĕ.

Аркадий ЕÇХĔЛ.

Пирĕн урамра—уяв!

Совет халăхĕ чĕререн кĕтнĕ татăклă çĕнтерӳ кунĕ çитни çинчен Мускав дикторĕ радиопа пĕлтернĕ вăхăтра Якунин юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводри касхи сменăри рабочисем кашни хăйĕн вырăнĕнче ĕçленĕ, çĕршывпа Хĕрлĕ Çара кирлĕ продукци туса кăларнă.

Юнлă вăрçă пĕтни çинчен механически цехри рабочисене цех начальникĕ А. Носов юлташ пĕлтернĕ.

Ырă хыпар рабочисене хумхантарса янă, вĕсем савăннипе пĕр-пĕрине ыталаса чуп тунă. Çавăнтах хĕрӳллĕ митинг пуçланнă.

— Пирĕн урамра та уяв пулать, тесе шантарнăччĕ пире Сталин юлташ. Çулпуç сăмахĕ пурнăçа кĕчĕ. Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ, çĕнтерӳ хĕвелĕ тухрĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн урамра—уяв, çĕнтерӳ уявĕ, халăх уявĕ! — тенĕ савăнса, мастер-комсомолка Полина Чернецкая.

Митингра тухса калакансем пурте çак çĕнтерӳшĕн пирĕн Хĕрлĕ Çара, унăн гениллĕ полководецне Сталин юлташа тав тунă.

Çĕнĕ заема çырăнса илесси—кашни ĕçсыннийĕн патриотла тивĕçĕ!

Заема çырăнса илнипе пĕрлех укçине те парса татар!

СССР Наркомфинĕ пĕлтерни

1945 çулхи майăн 5-мĕшĕнче 25 миллиард тенкĕлĕх кăларнă Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне майăн 7-мĕшĕ пĕтнĕ тĕле 25 миллиард та 65 миллион тенкĕлĕх сарнă.

Çапла вара, заемăн сарма палăртнă суммине ытлашшипех тултарнă.

Заем сарас ĕç малалла пырать.

СССР Наркомфинĕ А. ЗВЕРЕВ.

1945 çулхи майăн 8-мĕшĕ.

Заем кампанине лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ

МУРКАШ. Районри колхозсемпе промартельсем заем кампанине лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Çавăнпа кунта Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне сарас тата укçине пухас ĕçсем ăнăçлă пыраççĕ. Майăн 8-мĕшĕ тĕлне районра çĕнĕ заема пурĕ 3.865.000 тенкĕлĕх, е бюджетпа пăхнин 100,1 проценчĕ чухлĕ вырнаçтарнă. Вăл шутран укçине 2.145.000 тенкĕ пухса панă.

Районри вуншар колхозсем заем укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă. «Красное Отчево», «Тиушн», Жданов ячĕпе тăракан колхозсем, пĕлтĕр çак ĕçре юлса пынăскерсем, кăçал заем кампани пуçлансан 1—2 кун хушшинчех укça пухса çитерсе перекет кассине хывнă. «Красное Отчево» колхозпа унти колхозниксем пурĕ 60 пин тенкĕ пухса панă. «Тиушн» колхоз членĕсем 30 пин тенкĕ тӳленĕ.

Анчах заем укçи пухас ĕç районра пур çĕрте те пĕр пек пулса пымасть-ха. Хăшпĕр ял Советсенче çак ĕçе хакламаççĕ. Сăмахран, Матьăк ял Советĕнчи 4 колхозра заема 252 пин тенкĕлĕх сарнă. Укçине вара 27 пин тенкĕ кăна пухнă. Вăрманкасри «Труд» колхоз—пысăк колхоз, Унта заем укçине 3.000 тенкĕ çеç пухнă. Киров ячĕпе тăракан колхоз та 3.100 тенкĕ анчах тӳленĕ.

Ялти актив пример кăтартать

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Районри ĕçсыннисем вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш заема хапăл туса çыранаççĕ. Майăн 8-мĕшĕ тĕлне районĕпе пурĕ 4.265.000 тенкĕлĕх çыраннă, укçине 2.181.000 тенкĕ пухса панă.

Çĕнĕ заема çырăнса илес ĕçре ялти актив пример кăтартать. «Красноармеец» колхоз председателĕ Н. Данилов—3.000 тенкĕлĕх, колхозниксем Янчиков, Петров тата Алексеев—1.000-шар тенкĕлĕх çыраннă. Вĕсем укçине те çийĕнчех парса татнă.

М. ОГОРОДНИКОВ.

Заема çыраннипех ĕç пĕтмест

ÇĔРПУ, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри предприятисемпе колхозсем, промартельсем тата ĕçсыннисем хушшинче Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне пурĕ 4.492.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Çĕнĕ заема бюджетпа пăхнинчен 12.000 тенкĕ ытларах сарнă.

Анчах районра заем укçине пухас ĕç юлса пырать-ха. Паянхи кун тĕлне пурĕ 1.172.000 тенкĕ (е заема сарнипе танлаштарсан, 26 процент) кăна пухнă.

Заем укçине пухас тĕлĕшпе уйрăмах Уйкас ял Советĕнчи колхозсем начар ĕçлеççĕ. Кунти «Дружба» колхоз çеç заем укçине 50 процент чухлĕ пухса панă. «Верный путь» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем вара пачах та пухман. Уйкас ял Совет председателĕ Федорова, унти парторганизаци секретарĕ Ильин юлташсем заема çырăнтарнипех ĕç вĕçленнĕ тесе шутлаççĕ пулас, укçине çийĕнчех пухса парас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Калинин ячĕпе тăракан, «Верный путь» колхозсен председателĕсем Гаврилова Герасимов юлташсем те çак тĕлĕшпе нимĕнех те тумаççĕ.

Сырмапуç ял Советĕнчи колхозсем те заем укçине пухас ĕçе хакламаççĕ. «Дружба» колхоз заем укçине 5.000 тенкĕ çеç пухнă. «Красный плуг», «6-мĕш августа» колхозсем пухма та тытăнман.

Майăн 5-мĕшĕ — *Тĕштырăсемпе курăксене акса пĕтермелли вунăкунлăх* — Майăн 15-мĕшĕ

ÇУРХИ КУН ÇУЛТАЛĂКА ТĂРАНТАРАТЬ

Хăвăртрах та лайăхрах акатăн — вăйлă тырпул пухса илетĕн!

Çураки ĕçĕсем районсенче мĕнле пыраççĕ

Майăн 8-мĕшĕ тĕлне илнĕ сведенисем тăрăх, çураки планне Шăхасан районĕ 61,6 процент, Вăрнар районĕ 60,5 процент, Чурачăк районĕ 57,5 процент, Калинино районĕ 54 процент, Красноармейски район 52,3 процент, Çĕрпӳ районĕ 45,4 процент, Елчĕк районĕ 44,8 процент тултарнă.

Майăн 8-мĕшĕнче Октябрьски, Вăрмар, Шупашкар, Чурачăк, Елчĕк районĕсем ăнăçлăн ĕçленĕ. Çак районсенчи колхозсем хăйсем акма пăхнă графика пĕтĕмпех е ирттерсе тултарнă. Çĕмĕрле, Первомайски, Тăвай, Канаш, Йĕпреç, Элĕк районĕсенчи колхозсем хăйсен графикне пурнăçлаймаç.

Майăн 8-мĕшĕнче Иçлей районĕ 30-мĕш вырăнтан 26 вырăна хăпарнă.

Çураки ĕçĕсем çаплипех Кувакино, Çĕмĕрле, Первомайски, Йĕпреç районĕсенче питĕ япăх пыраççĕ. Çав районсем çураки планне 19 процентран пуçласа 23 процента çити кăна тултарнă.

ФЕРМА ÇУМĔНЧИ УЧАСТОКСЕНЕ АКАÇÇĔ

ЕТĔРНЕ, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем кăçал ферма çумĕнчи участоксене 250 гектар акма пăхнă. Çак участоксене çĕрулми, утăлăх вика тата тымар-çимĕçсем те акаççĕ. Колхозсем выльăх кăшманĕн вăрлăхне 14 центнер хатĕрлесе хунă.

Уйрăм колхозсем ферма çумĕнчи участоксене акма тытăнчĕç ĕнтĕ. «Победа» колхоз 2 гектар викăпа сĕлĕ, Киров ячĕпе тăракан колхоз 2 гектар клевер акрĕç. Етĕрне хулинчи колхоз тата Буденный ячĕпе тăракан колхоз çуллахи вăхăтра ĕнесене çитерме итем вырăнĕсене викăпа сĕлĕ акаççĕ.

Ферма çумĕнчи участоксене акас ĕçе ытти колхозсенче те тытăнаççĕ.

И. ЛЕПЕШКИН.
Райçĕрĕç пайĕн агрономĕ.

ПĔРЧĔЛЛĔ ТЫРĂСЕНЕ АКСА ПĔТЕРЧĔÇ

СĔНТĔР, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Малта пыракан «Ударник», «Селька», «Çĕнĕ Юнкă», «Новый путь», «Путь Ильича», Мичурин, Ватутин тата 1905 çулхи революци ячĕпе тăракан колхозсем пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерчĕç.

Сĕнтĕрти «Ударник» колхоз (председателĕ Сыров юлташ) пĕрчĕллĕ тырăсене районра чи малтан акса пĕтерчĕ. Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем ирпен пуçласа сĕм тĕттĕмччен ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Çак колхозра çуракинчи ăмăртура З. Степанова юлташ ертсе пыракан бригада мала тухнă.

Г. МОИСЕЕВ.

* * *

ÇĔРПӲ, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). «Балтиец» колхоз хыççăн, паян «Дружба», «Красный Перекоп», «Красный флот» колхозсем тĕштырăсемпе пĕр çул ӳсекен курăксене акса пĕтерчĕç. Условисем пĕр пекех пулсан та, «Красный плуг», Куйбышев, Чапаев, Сталин ячĕпе тăракан колхозсем çуракине тăсса пыраççĕ. «Победа» тата «Лисерия» колхозсем тырă акма та пуçăнман. «Малалла» тата «Путь Ленина» колхозсем çĕре 7—8 сантиметр тарăнĕш кăна сухаласа агротехникăна пăснă.

А. ИВАНОВ.

* * *

Канаш районĕнчи «Хавас» колхоз (председателĕ Лукин юлташ), «Красная Армия» колхоз (председателĕ Яковлев юлташ), Каганович ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Коняшин юлташ) пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерчĕ. «Красная Армия» колхозри сухаçсем Сорокинпа Андреев юлташсем кулленхи нормăна кашниех 150 процент тултарса ĕçленĕ. Вăкăрпа сӳрелекен Ивлев Николай кулленхи нормăна 200-шер процент тултарнă.

* * *

Шăмăршă районĕнчи «Канаш», «Новая деревня» колхозсем те пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерчĕ. «Динамо», «Заря», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем те паян-ыран пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтереççĕ.

Мульчировани тăваççĕ

Калинино районĕнчи Уйкас Явăшри Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Çак колхоз членĕсем 11 гектар çинчи кĕрхи калчана вĕтетнĕ улăмпа мульчировани тунă, 58 гектар çинчи калчана вырăнти удобренисемпе апатлантарнă.

Примерлă колхозник

Комсомольски районри Ельпуç ял Советне кĕрекен «Мотор» колхоз членĕ Алимуллов юлташ хăйĕн колхозне 64 пăт вăрлăхлăх çĕрулми панă. Ун хыççăн ытти колхозниксем те çĕрулми пама тытăннă. Халĕ колхозăн çĕрулми вăрлăхĕ çителĕклĕ.

Юманов тракторист хăйĕн планне тултарнă

ШĂМĂРШĂ, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе панă приказĕ пичетленсе тухнă хаçатсене илсенех районри колхозсенче тата МТС-ăн трактор бригадисенче пухусемпе митингсем пулса иртрĕç. Колхозниксемпе трактористсем, Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланса, çуракинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ.

Чаткасри Сталин ячĕпе тăракан колхозра ĕçлекен 17 çулхи çамрăк тракторист Федор Юманов СТЗ-НАТИ тракторпа 4 кун хушшинче хăй сменинче 56 гектар сухаласа çураки вăхăтĕнче тумалли нормăна ытлашшипех тултарнă. Митингра Юманов çапла каланă:

— Пирĕн Хĕрлĕ Çар воинĕсем фашистла вăрă-хурахсене хăйсен шăтăкĕнче аркатса пынă вăхăтра, эпир, тылрисем, фронтовиксене тивĕç ĕçлемелле. Çураки вăхăтĕнче эпĕ хама панă плана 200 процентран кая мар тултаратăп,—тенĕ.

Юманов ĕçлекен колхозпа кӳршĕллĕ Патирек ялĕнче ĕçлекен Хаетдинов тракторист та хăйĕн çураки вăхăтĕнче сухалamалли планне тултарнă. Ытти трактор бригадисенче те ĕç ăнăçлă пырать.

Н. ПАДИАРОВ.

Ака ĕçĕнчи çитменлĕхсем

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Çураки пуçланнăранпа темиçе кун иртрĕ пулин те, «Красные Четаи» тата «Трудовик» колхозсем ака ĕçне тивĕçлипе тытăнман-ха. Кунта ĕçе ир тухмаççĕ, 12 сехетрен пуçласа 5 сехетчен кăнтăрлахи апат çиеççĕ.

— Мĕншĕн кăнтăрлахи апат вăхăтне 5 сехет хушши тăсатăр вара эсир?—тесе ыйтсан, колхоз председателĕ Еремеев юлташ çапла ответлет:

— Пирĕн лашасем начар, ытларах кантаратпăр,—тет.

Анчах та лашасене суха касси çинчех тăрантарассине организацилемен. Бригадирсем, ĕçе организацилес вырăнне, хăйсем те ĕçрен ирех пăрахса каяççĕ. Çапла ĕçленине пула, «Трудовик» колхоз паянхи куна 143 гектар сухала вырăнне 17 гектар çеç сухаланă, гектар акнă.

Хăшпĕр колхозсенче акасси сухаласинчен чылай юлса пырать. «Большевик» колхоз 16 гектар, Киров ячĕпе тăракан колхоз 26 гектар сухаланă, анчах пĕр гектар та акман.

П. ТИХОНОВ.
(Хамăр корр.).

Агротехникăна пăсма юрамасть

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри колхозсенче çураки ĕçĕ хĕрӳллĕн пырать. Хăшпĕр колхозсем пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерчĕç. Пайзубино ял Советĕнчи «Красноармеец» колхоз майăн 2-мĕшĕнче пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерчĕ. Мĕнпур акнă тырăсенчен 40 процентне ытла машинăпа акнă. Ака пахалăхĕ лайăх. Уйхирте ĕçлекенсем валли колхозра столовăй уçнă. Агитаторсем колхозниксене фронтри хыпарсене пĕлтерсех тăраççĕ, çĕнĕ хаçатсене вуласа параççĕ. Ку ял Советĕнчи «Жнейка» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче те столовăй организациленĕ.

Анчах хăшпĕр колхозсем ака ĕçне тăсса пыраççĕ-ха. Кушар ял Советĕнчи колхозсенче акмалли мĕнпур çĕр лаптăкĕн 40 процентне çеç сухаланă. Ку колхозсенче сухаçăсене уйрăм участоксем уйăрса паман, сдельщинăпа ĕçлемеççĕ. Çавăн пекех «Победа» колхозра та çакăн пек çитменлĕхсемех пуррине палăртмалла. Кунта ăшăх сухалаççĕ. Çак çитменлĕхсене сиенĕнчех пĕтермелле.

С. ШАДИН.

Трактористсен ĕçне комисси йышăнман

Комсомольски районри «Ударник» колхоз пĕрчĕллĕ тырăсене акассине 5 кун хушшинче вĕçлерĕ. Тĕштырăсен вăрлăхĕсене яровизацилесе тата машинăпа лайăх пахалăхпа акнă. Кĕçĕн Çĕрпӳелĕнчи «Красный Октябрь» колхозра та çураки ĕçĕсем лайăх пыраççĕ. Çураки ĕçĕнче ĕçлекенсем М. Григорьева, П. Макаров, Е. Скворцова, М. Щетинкин, Н. Григорьев юлташсем хăйсен кулленхи ĕç нормине 120—125-шер процент тултараççĕ. «Мотор» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем те çуракинче хастарлăн ĕçлеççĕ. Кунта С. Хайруллин, М. Закиров, С. Сиразетдинов, Т. Исхаков, С. Лакатов юлташсем кулленхи нормăна 150—160-шар процент тултараççĕ.

Майăн 7-мĕшĕ тĕлне районĕпе 4537 гектар акнă. Паллах, ку çитменлĕхсĕр. Хăшпĕр колхозсенче агротехникăна пăсаççĕ. «Заветы Ильича», «Ленинская победа», «Новая жизнь» колхозсенче сухаланă хыççăнах сӳремеççĕ. «Сĕнтерӳ», «Красный борец», «Сормово», Пушкин ячĕпе тăракан колхозсенче алăпа акаççĕ.

МТС тракторĕсен ĕçне те кирлĕ пек организацилемен-ха. Урмаел ял Советне кĕрекен колхозсенче 5 кун хушшинче 6 тракторпа пурĕ те 30 гектар кăна сухаланă. Кунсăр пуçне, ĕçĕн пахалăхĕ уйрăм трактор бригадисенче тивĕçлĕ вырăнта мар. «Первое августа» колхозра тракторсемпе сухаланă 8 гектара пахалăх комиссийĕ йышăнман. «Новая жизнь» колхозра сухаланă 50 гектар çĕре сӳремесĕр тивĕтсе янă.

В. АНДРЕЕВ.
(Хамăр корр.).

Агитаторсем ĕçре

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăва ял Советĕнчи агитколлектив хăй ĕçне çуракинче ĕçлекенсем хушшинче хирте ăнăçлă туса пырать. Агитаторсене уйрăм колхозсемпе бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем халĕ Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе панă приказне тата Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене колхозниксене ăнлантарса параççĕ. Агитмассăллă ĕçре уйрăмăнах Александра Михайлова, Евгения Иванова тата Зинаида Захарова агитаторсем лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсем яланах колхозниксем хушшинче уйхирте хаçатсем вуласа параççĕ, фронтри лару-тăру çинчен ăнлантарса параççĕ тата бригадăсенче боевой листоксем кăлараççĕ.

Çĕнĕ Пăвари «Победа» колхоз çуракине пур енчен те лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Ку ĕçре колхоза агитаторсем пысăк пулăшу пачĕç. Халь агитаторсем колхозниксемпе пĕрле çуракинче ĕçлеççĕ, канна вăхăтсенче çĕнĕ хыпарсем каласа параççĕ. Колхозниксем кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

В. НАУМОВ.

Польша Халăх Совечĕ Польшăпа Совет Союзĕн договорне ратификациленĕ

ВАРШАВА, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Польша Халăх Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче Польшăпа ССР Союзĕ туслăх, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă договора ратификациленĕ.

Берут президент Осубка-Моравский премьер-министра сăмах панă. «Пирĕн демократиллĕ правительствăн политики,—тенĕ премьер,—1939 çулхи сентябрьччен тытса пынă тулашри политикăран çакăнпа уйрăлса тăрать: пирĕн правительство дипломатиллĕ вăрттăн ĕçсем тумасть, халăх интересĕсене сыхлакан уçăмлă политикăна тытса пырать.

Бекăн халăха хирĕçле сиенлĕ политики,—тесе кăтартса панă Осубка-Моравский,—Польша халăхне çав тери пысăк йывăрлăх патне илсе пычĕ. Анчах Бек хăй ют çĕршыва тарчĕ. Демократиллĕ правительство халăхăн интересĕсене сыхлакан политикăпа тытса пырать, малашне те тытса пырĕ. Çакна Польшăпа Совет Союзĕн договорĕ, Польша халăхĕ тăрăшнипе тунăскер тата унăн интересĕсене сыхлаканскер, кăтартса парать. Çак договор историллĕ документ, пирĕн çĕнĕрен çуралнă Польшăн питĕ паха дипломатиллĕ ĕçĕ, Европăра пĕтĕм тĕнчен сыхлăх ĕçне пулăшни пулса тăрать» (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Договора вуласа панă хыççăн Швальбе (ППС), Польша Халăх Совечĕн президиумĕн членĕ Ковальский, Одеркевич (Стронництво демократичне), Клишко Зенон (ППР) тата Софья Налковская писательница сăмах тухса каланă. Вĕсем пурте ССР Союзĕпе Польша тунă договора, икĕ тăванла халăх хушшинчи хирĕçӳсене ĕмĕрлĕхех пĕтернĕскере, Европăра нумайлăха мир тумалли условисем туса панăскере, хĕрӳллĕн ырланă.

ПОЛЬШĂН ÇĔРЕÇ МИНИСТРĔ БЕРТОЛЬД ТУХСА КАЛАНИ

ВАРШАВА, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче Польша республикин çĕрĕç министрĕ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Вăхăтлăх правительствăн ялхуçалăх тĕлĕшпе тунă тĕп ĕçĕ—çĕр реформине туса ирттерни пулнă. Мĕн пурĕ 7.000 ялхăн помещикăн 4.242.949 гектар çĕрне валеçмелле пулнă. Çав шутран 1.844.771 гектар вăрмана хальхи вăхăтра государство аллине панă. 302.893 çемье, е миллион çурра ялхăн çын, çĕр тытса тăма право илнĕ.

Польшăра ялхуçалăх шкулĕсем тăвас ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхатпăр. Çав шкулсенче 6.000 çынна ялхăн вĕренет те ĕнтĕ. Ялхуçалăх шкулĕсен хисепĕ кулленех ӳссе пырать. Нумай ялхуçалăх шкулĕсене, гимназисене, лицейсене тата университетсене халь организацилетпĕр.

Хуласем тавра хула çумĕнчи хуçалăхсем тума шутлатпăр,—тет докладчик. —Уйрăм çынсене пахчасем тума чылай çĕр уйăрса панă. Германирен тата вăл оккупациленĕ çĕршывсенчен каялла таврăнакан çынсем валли тата ытти çĕртен куçса килекенсем валли çĕр чылай уйăрса хунă. Вăрлăх пирки тата транспорт пирки йывăрлăхсем пулнă пулин те, помещиксем саботаж тунă пулин те, çураки кăçал, пирĕн тăшмансем каланă пек мар, питĕ ăнăçлăн иртет. Совет Союзĕ пире йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшрĕ, вăл пире вăрлăх тата транспорт пачĕ. Хĕрлĕ Çар хĕвеланăç енчи территорире 750.000 гектар çĕр акма пулăшрĕ.

ПОЛЬШĂН ПРОМЫШЛЕННОСТЬ МИНИСТРĔ МИНЦ ТУНĂ ДОКЛАД

ВАРШАВА, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче министрсен совечĕн экономика комитечĕн председателĕ—промышленность министрĕ Минц доклад туса панă. Минц çапла каланă: хальхи вăхăтра Польшăра промышленность предприятийĕсен пысăк пайне хута янă, çитмен чĕртавара ытти ресурссене мобилизацилесе тунă тата Совет Союзĕнчен кӳнĕ.

Ĕçлекенсен хисепĕ кунсеренех ӳссе пырать.

Хулари халăхăн, чи малтан рабочи бригадисен пуçарăвне пула, выçлăх пулассине сирсе янă. Суту-илĕве аталантарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă.

Хуçалăхра чи пысăк çитменлĕх вăл — транспорт çукки пулнă. Анчах ку тĕлĕшпе те чылай ĕç тунă. Нимĕçсем тытса илнĕ ремеслапа суту-илӳ предприятийĕсене нумайĕшне хăйсен хуçисене таврăса панă.

Укçа-тенкĕ реформине ирттерсе, Польшăра наци банкĕн контроллесе тăракан валютине—злотыя—пурнăçа кĕртнĕ. Пĕтĕм çĕршывĕпех ĕçукçин пĕр пек ставкисене туса хунă. Нумай таварсемшĕн пĕр пек хак туса хунă, пасарти хаксем те пĕрпекленсе пыраççĕ.

«Çĕршывăн хуçалăх пурнăçне мĕнле хăвăртлăхпа юсанине ирĕке кăларнă ытти çĕршывсенчипе, сăмахран, Францирипе, Бельгирипе, Голландирипе, Италирипе, Грецирипе танлаштарсан, çапла каламалла: эпир хамăр хуçалăха ытти çĕршывсенчен хăвăртрах тата сахалтарах çухатусем тӳссе юсатпăр. Çакăнта, пуринчен ытла, Польша халăхĕ хăйĕн Вăхăтлăх правительствине шанса ăна пулăшса тăни пулăшать», тенĕ Минц.

ПОЛЬША ПРАВИТЕЛЬСТВИНЧИ УЛШĂНУСЕМ

ВАРШАВА, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Совечĕн сессийĕн май уйăхĕн 3-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче Совет президенчĕ Берут çапла пĕлтернĕ: майăн 2-мĕшĕнче эпĕ Эдуард Осубка-Моравский хăйне пĕр вăхăтрах ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ те пулса ĕçлессинчен хăтарма ыйтнипе килĕшрĕм. Çавнашкалах тата Эдмунд Залесский хăйне юстици министрĕ пулса ĕçлессинчен хăтарма ыйтнипе, Винцента Ржимовский хăйне культурăпа искусство министрĕ пулса ĕçлессинчен хăтарма ыйтнипе килĕшрĕм. Министрсен совечĕн председателĕ сĕннĕ тăрăх, Берут Винцента Ржимовские ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ, Свентковские юстици министрĕ тата Эдмунд Залесские культурăпа искусство министрĕ тунă.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН ФЕДЕРАЦИЙĔН УСТАВĔ

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн Администраци комитечĕн пресс-конференцийĕнче ĕнер устав проектне пурте пĕрсаслă йышăнни çинчен каласа панă. Çав проекта пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен кăçалхи февральте Лондон хулинче пулса иртнĕ конференцине хутшăннă 35 çĕршыври профсоюз организацийĕсене ярса параççĕ. Производствăллă профсоюзсен конгресĕн председателĕ Мэррей Администраци комитечĕ ячĕпе çапла каланă: пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ кăçал сентябрь уйăхĕнче тепĕр хут пухăнать, вăл Париж хулинче малта асăннă устава ратификацилеме пухăнать, тенĕ.

Отсрочкăсем çинчен йышăннă закона Трумэн пăрахăçланă

ВАШИНГТОН, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Президент Трумэн ялхуçалăхĕнчи рабочисене çар службине илес тĕлĕшпе отсрочкăсем парасси çинчен йышăннă закона пăрахăça кăларнă. Ку закон тăрăх ялхуçалăхĕнчи пур рабочисем те тенĕ пекех отсрочкăпа усă курмалла пулнă. Трумэн çапла каланă: «Пĕр ушкăн · та нимĕнле уйрăм çăмăллăхсемпе те усă курма пултараймасть», тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛĔ ВĂЙĔСЕН ВЕРХОВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен аллине Гиммлерăн апрелĕн 14-мĕшĕнче панă приказĕ лекнĕ. Çав приказра Дахау хулинчи питĕ паллă концентрациллĕ лагерьте тыткăнра пурăнакан пĕр çын та «тăшман аллине чĕррĕн лекмелле мар», тесе кăтартса панă. Гиммлер çав лагере çийĕнчех урăх çĕре куçарма хушнă.

ФРАНЦУЗСЕМ ГЕРМАНИ КРОНПРИНЦНЕ, ФОН НЕЙРАТА ТАТА ГЕОРГ ФОН МАКЕНЗЕНА ТЫТКĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Парижри радио, официальнăй пĕлтерӳ çине кăтартса, çапла пĕлтернĕ: Франци çарĕсем Германи кронпринцĕ пулнă Вильгельма, Кайзер ывăлне, тыткăна илнĕ. Парижри радио çавăн пекех тата французсен 1-мĕш армийĕ Германин импери министрне тата Англире посол пулса пурăннă Константин фон Нейрат барона, Германин Италири послĕ пулнă Ганс Георг фон Макензена тыткăна илни çинчен пĕлтернĕ.

Рейтер агентстви хăйĕнчен хушса çапла пĕлтерет: фон Нейрат «СС»-ăн обергруппенфюрерĕ, вăрттăн советăн председателĕ тата импери министрĕ пулнă. 1941 çулхи сентябрь уйăхĕччен вăл «Богемипе Моравин протекторатĕнче» Гитлерăн наместникĕ пулнă, ку вырăна ун хыççăн вара Гейдриха лартнă. Чехсен правительстви Пĕрлешнĕ нацисен комиссине вăрçă преступникĕсен списокне тăратнă, çав списокра фон Нейратăн хушамачĕ чи малта тăрать.

АНГЛИ ÇАРĔСЕМ ГЕРМАНИ ФЕЛЬДМАРШАЛĔН ФОН БОКĂН ВИЛЛИНЕ ТУПНĂ

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи çарĕсем икĕ çул каярах нимĕç çарĕсен хĕвелтухăç фронтĕнчи командующийĕ пулнă фон Бок фельдмаршалăн виллине тупнă. Фон Бока Англи истребителĕсем чакса пыракан нимĕçсен колоннине пенĕ чухне вĕлернĕ.

КĔСКЕН

* Бельгири социалистсен партийĕн исполнительнăй комитечĕ çыру пичетлесе кăларнă, унта вăл Леопольд королĕ вырăнтан тухма хушнă.

* Итали партизанĕсем Швейцари чиккинче Муссолини ывăлне Витторио Муссолинне, çавăн пекех тата фашистла правительствăн финанс министрне арестленĕ.

* США-ри суднăсем тăвакан верфьсем апрель уйăхĕнче пĕтĕмпе 1.400.073 тонна тиякан 103 судно тунă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Совет Союзĕн Геройĕ Чернов

1944 çул. Сулла. Пирĕн чаçсем, нимĕçсене йĕркисĕр каялла чакакан тăшмана хăваласа, хăвăрт хĕвеланăç еннелле куçса пырса, Хĕвеланăç Европăри пысăк юханшыв—Висла шывĕ çине пырса тухрĕç. Фашистсем Висла шывĕн тепĕр çыранĕнче хӳтĕленме малтанах хатĕрленсе тăнă. Вĕсем кунта пирĕн çарсен наступленине тытса чарма ĕмĕтленнĕ. Анчах пирĕн наступление чарса тăма пултаракан вăй çук.

Пирĕн чаçсем Висла шывĕ урлă каçма тытăннă.

Чернов лейтенант — бронебойщиксен взвочĕн командирĕ—хăйĕн боецĕсемпе пĕрле юханшыв урлă каçса унăн хĕвеланăç çыранĕнче çирĕпленсе ларма приказ илнĕ.

Чернов юлташ хăйĕн çапăçури юлташĕсене пулăç кимми çине лартнă та, кимĕ вара нимĕçсен куçĕ умĕнчех Висла шывĕн хĕвеланăçĕнчи çыраннелле ишсе кайнă. Нимĕçсем кимĕ çине урнă пек пеме тытăннă. Йĕри-тавра снарядсемпе минăсем çурăла-çурăла кайнă, вĕсен катăкĕсем кимĕ çинче тăракан боецсем патĕнчен шăхăра-шăхăра иртнĕ. Юханшывăн хĕвеланăç çыранĕнчен шултăра калибрлă пулеметсемпе çăмăл пулеметсем таттисыппăсăр персе тăнă. Кимĕ тавралăхĕнчи шыв, çăмăр пек пульăсем ӳкнипе пула, шурă кăпăкпа хупланнă, анчах та пулăç кимми урса кайнă юханшывăн хумĕсем çапнине пăхмасăрах, утрав еннелле ишсе пынă.

Таçтан тăшманăн 40 самолечĕ ытла вĕçсе килнĕ. Юханшыв çине бомбăсем ӳкме тытăннă. Чернов лейтенант хăй кимĕ пуçĕнче тăнă. Кимĕ йĕри-тавра ӳкекен бомбăсем ăна пăшăрхантарман, унăн ирĕкне чакарман. Унăн пĕтĕмпе те пĕртен пĕр ĕмĕт çеç пулнă: хăвăртрах çыран хĕррине тухас та тăшмана тустарма тытăнас. Вăл хăйĕн боецĕсене хавхалантарнă, васкатнă. Боецсем те веслисемпе çине тăрсах ишнĕ. Пуç тĕлĕнчен тăшманăн самолечĕ, бомбăсем пăрахмалли тĕллеве шыраса, вĕçсе иртсе кайнă. Тĕллеве—Чернов лейтенантăн киммине—курсан, вăл хăвăрт вĕçсе аннă та виçĕ бомба пăрахса хăварнă. Кимĕ взрыв вăйне чăтаймасăр тӳнсе кайнă, Чернов лейтенант хăйĕн боецĕсемпе пĕрле шыва ӳкнĕ.

Кĕне-тумтирпе, хĕçпăшалпа тата боеприпассемпе ишме йывăр пулнă. Унсăр пуçне тата шыв юхăмĕ боецсене сыхлăмалла илсе кайнă. Чернов лейтенантпа унăн боецĕсем халĕ шывпа кĕрешме тытăннă. Чернов юлташ е пĕрне, е тепĕр боеца пулăшу панă, вĕсем вара кăшт каннă хыççăн татах шывпа кĕрешме тытăннă. Çапла вара пĕтĕм взвод утрав çине тухнă та унтан ăшăх вырăн урлă юханшывăн хĕвеланăç çыранне каçма тытăннă.

Юханшывăн хĕвеланăç çыранĕнче пирĕн паттăрсен пĕчĕк ушкăнĕ тăшманăн пысăк чаçĕпе çапăçнă. Чернов лейтенант хăйĕн взвочĕпе çавсене пулăшма васканă. Çул çинчех вăл тăшманăн пулемечĕсем ăста вырнаçнине асăрханă та хăйĕн танксене пемелли пăшалĕн мĕнпур вăйне çав пулеметсем çине янă.

Нимĕçсем пирĕн паттăрсене хытăрах та хытăрах хĕсме тытăннă. Çыран хĕрринче питĕ хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Тăшман, пирĕн боецсене шыва каялла сирпĕтсе ярас тесе, хăйĕн резервĕсене те çапăçăва кĕртсе янă. Темиçе контратакăна сире-сире пăрахнă та ĕнтĕ. Бронебойщиксен патронсем пĕтнĕ. Гитлеровецсем, çавна сиссе пулас, тата хытăрах хĕсме тытăннă. Чи ответлă тапхăр килсе çитнĕ. Чернов ăнланнă: çак самантра юханшывăн сулахай енчи плацдармшăн пыракан кĕрешĕвĕн татăклă саманчĕ çитнĕ. Вăл курнă: хĕвелтухăçĕнчи çыранран, хамăр енчи çыранран, вăл мĕнле çапăçнине пĕтĕм совет халăхĕ пăхса тăрать.

— Тусăмсем, тытăнса тăратпăр, çапăçса илнĕ çĕре тăшмана каялла памастпăр,—тенĕ вăл хăйĕн боецĕсене.

Боецсем, хăйсен командирĕн Чернов лейтенантăн хăюлăхĕпе хавхаланнăскерсем, гитлеровецсен ултă контратакине сирсе пăрахнă, ун хыççăнах çиччĕмĕш контратака пуçланса кайнă. Халĕ ĕнтĕ гранатăсем те пĕтсе çитнĕ. Патронсем те пулман. Нимĕçсем килеççĕ те килеççĕ. Шăпах çак самантра Черновăн хăватлă сасси янăраса кайнă:

— Тусăмсем, тăван çĕршывшăн, Сталиншăн—малалла, атакăна!

Хăйĕн юратнă командирĕ хыççăн пĕтĕм взвод çĕкленнĕ те «урра» кăшкăрса малалла ыткăннă. Боецсем гитлеровецсен хушшине çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Чернов нимĕçсен хушшине пуринчен малтан кĕрсе кайнă та хăйĕн автоматĕн прикладĕпе нимĕçсене пуçран илтерме тытăннă.

Нимĕçсем пирĕн боецсен хастарлăхне чăтайман, тарма тытăннă. Çак çапăçура тăшманăн вăйĕ ытларах пулнă пулин те, Черновпа унăн боецĕсем çĕнтернĕ.

Бронебойщиксен мухтавлă взвочĕ юханшывăн хĕвеланăç çыранĕнчи плацдармшăн пынă кĕрешӳре тăшманăн çичĕ контратакине сирсе пăрахнă, 12 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата пĕр взвод ытларах вĕлерсе пĕтернĕ.

Бронебойщиксен хăюллă командирĕ, пирĕн юратнă Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕ Чернов çак çапăçусенче хăйне ĕмĕрлĕхе мухтава кăларчĕ.

Эпир, унăн землякĕсем, унпа пĕр чаçре çапăçакансем, Чернов юлташпа тивĕçлипех мухтанатпăр.

Чернов юлташăн хăюллă ĕçĕсем çинчен унăн тăван ял çыннисем—Комсомольски районри Асанкасси колхозникĕсем пĕлччĕр. Ун çинчен унăн арăмĕпе ачи-пăчисем пĕлччĕр. Ун çинчен пĕтĕм чăваш халăхĕ пĕлсе тăтăр.

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн 1945 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Федор Николаевич Чернов лейтенанта Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Майор Ф. Я. ЯКИМОВ.
ÇАПĂÇУРИ ÇАР.

ПЕРЕКЕТ КАССИСЕНЧИ ВЫЛЯВЛĂ ВКЛАДСЕМ
ШУПАШКАР ХУЛИНЧЕ АПРЕЛĔН 10-МĔШĔНЧЕ ПУЛСА ИРТНĔ 5-МĔШ ВЫЛЯВĂН ОФИЦИАЛЬНĂЙ ТАБЛИЦИ

Чăваш республикинчи мĕнпур перекет кассисенчи вылявлă вкладсен счечĕсем çак номерĕсем выляса илнĕ:

Счетсен номерĕсем	Вкладсен вăтам суммин çак проценчĕ чухлĕ выляса илнĕ	Счетсен номерĕсем	Вкладсен вăтам суммин çак проценчĕ чухлĕ выляса илнĕ
30	50%	537	50%
50	50%	572	50%
116	50%	626	50%
127	50%	671	200%
174	50%	682	50%
228	50%	734	50%
268	50%	797	100%
304	50%	827	50%
345	50%	842	50%
360	50%	911	50%
349	50%	934	50%
476	50%	983	50%
483	100%		

Хăш перекет кассисенче счетсем 1000-тен ытларах, çав перекет кассисенче малалли пинсен пĕрремĕш пинри пек номерĕсем пурте выляса илнĕ, сăмахран, 1030, 2030, 3030 номерсем т. ыт. те.

Тираж Комиссийĕн Председателĕ ТАВРИН.

Тираж Комиссийĕн Председателĕн Заместителĕ ВЕСЕЛОВ.

Государство кредичĕпе перекет ĕçне пулăшакан Комиссин Председателĕ САМОХВАЛОВА.

Комиссин ответлă секретарĕ БУДНИКОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31. 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00107 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000